# АСĂНУ ÇĂШĂЛĔ

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

Аттемĕр пулнă, асаттемĕр...
Ăна-кăна туйман пекех,
Ӳсеттĕмĕр ун чух, тетемĕр,
Эпир те чухăн — сан пекех.

Асап та курнă, хĕн те пулнă,—
Çил хуçаймарĕ тунаран!
Пиртен «чăваш» тесе те кулнă,
Мухтанă хăйсемех кайран.

Чăваш ятне çĕртмен ниçта та...
Ман санăн сĕтелӳ умне
Лармалăх тивĕçĕм пулман та,
Эп калайман çав каласне.

Пĕриншĕн — ĕмĕт пек эс юлăн,—
Никамшăн та пулман кичем.
Эс маншăн ĕмĕр-ĕмĕр пултăн
Поэзири чăн-чăн илем.

Тĕнчен пĕртен-пĕр Хусанкайĕ!
Эс ху та — вĕçĕмсĕр юмах.
Ĕмĕрлĕхех яту сан кайĕ
Тĕнче тăрăх,— вăл — шăпчăк-кайăк,
Вăл — çилçунатлă урхамах!

*1970*